28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ДЕКАБРЬ
14
ЭРНЕКУН
242 (6993) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ВКП(б) ЧĂВАШ ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ГОРКОМĔН ПĔРЛЕШŸЛЛĔ ПЛЕНУМĔ

Декабрĕн 11-мĕшпе 12-мĕш кунĕсенче ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Шупашкар горкомĕн пĕрлешŭллĕ пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум икĕ ыйту сŭтсе-яврĕ:

1. СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ май Чăваш парторганизацийĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен.

2. Куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине ŭстермелли мероприятисем çинчен.

Пĕрремĕш ыйтупа ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар горкомĕн секретарĕ **И. М. Чарыков** юлташ доклад туса пачĕ.

Чарыков юлташ çакна палăртрĕ: СССР Верховный Советне иккĕмĕш хут суйлас ĕç пирĕн çĕршыври халăхсен патриотла туйăмĕ çав тери хăватлăн çĕкленнĕ кунсенче пулса иртет. Отечественнăй аслă вăрçă историллĕ çĕнтерŭпе вĕçленнишĕн пирĕн халăх чун-чĕререн савăнать. Пĕтĕм совет халăхĕ пулăшса тăракан пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар, ăна çапăçура аслă Сталин ертсе пынипе, пирĕн çĕршыва большевиксен мухтавлă партийĕ—Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, фашистла ирсĕрсене çĕнтерме пултарчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче коммунистсен партийĕн авторитечĕ вĕçĕ-хĕррисĕр ŭсрĕ. Совет халăхĕ партипе таччăн çыхăнса тăрать, вăл партие хăйĕн кунçулне шанса панă.

Чарыков юлташ СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленес тата çав суйлава ирттерес май Чăваш парторганизацийĕ умне тухса тăнă конкретлă задачăсене çутатса пачĕ тата партиллĕ-организациллĕ, агитациллĕ-массăллă ĕçе вăйлатма кирлине кăтартса пачĕ.

Чарыков юлташ доклачĕ тăрăх прениpe 18 çын тухса каларĕ.

ВКП(б) Шупашкар горкомĕн секретарĕ **Ислюков** юлташ—СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ май республика столицинчи предприятисемпе учрежденисенче политикăллă ĕç чылай вăйланнине палăртрĕ. Суйлав ăнăçăвĕ массăсем хушшинчи ĕçе йĕркеленинчен килнине хулари пуçламĕш парторганизацисем ăнланса илнĕ. Малтанхи суйлав пулса иртнĕренпе Шупашкар хули чылай ŭсрĕ, суйлавçăсем йышланчĕç, çавна май суйлав участокĕсем те нумайланчĕç. Çакă вăл пĕтĕмпех хулари промышленность ŭсниинчен килчĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ суйлав кампанийĕ иртсе пынă май массăллă-ăнлантарулла ĕçе йĕркелессишĕн парти организацийĕсен ответлăхĕ те ŭсрĕ. Хулари ĕççыннисем,—тесе палăртать Ислюков юлташ,—çитес суйлава коммунистсемпе беспартийнăйсен блокĕ тăратакан кандидатсемшĕн сасăлас кăмăлпа кĕтсе илеççĕ.

ВКП(б) Канаш горкомĕн секретарĕ **Киреев** юлташ—СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ май Канаш хулинчи предприятисенче рабочисен производствăллă активлăхĕ татах та ытларах ŭсни çинчен каласа пачĕ. Канашри железнодорожниксем суйлав ячĕпе хăйсен ĕç тухăçлăхне ŭстерессишĕн кĕрешеççĕ. Предприятисемпе учрежденисен коллективĕсенче «СССР Верховный Советне суйламалли Положение», СССР Конституцине тата Сталин юлташăн Советсен Пĕтĕм Союзри VIII-мĕш Чрезвычайнăй Съездĕнче тунă докладне вĕренес ĕç анлăн сарăлчĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕн пĕр заводри парторгĕ **Борох** юлташ завод коллективĕ суйлав комиссийĕсене хăйĕн чи лайăх представителĕсене яни çинчен каласа пачĕ. Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Чăваш АССР-ĕнчи суйлав комиссин членĕ пулма завод коллективĕ стахановец-орденоносеца Дмитренко юлташа тăратрĕ.

ВКП(б) Обкомĕн оргинструкторски отделĕн заведующийĕ **Талдыкин** юлташ çакна палăртрĕ: парти райкомĕсемпе вĕсен аппарачĕсем лайăх ĕçлени суйлав кампанийĕнче уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вĕсен халĕ çине тăрса, тикĕс те йĕркеллĕ ĕçлемелле. Райком работникĕсен пуçламĕш парторганизацисене практикăллă ĕçре пулăшса тăмалла, вырăнта тухса тăракан ыйтусем çине тĕплĕ ответсем памалла, пуçламĕш парторганизацисем мĕнле ĕçленине лайăх пĕлсе тăмалла.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕ **Петрухин** юлташ комсомол Центральный Комитечĕн черетлĕ XIV-мĕш пленумĕ комсомол организацийĕсем умне СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ май лартнă боевой задачăсем çинчен чарăнса тăчĕ. Пирĕн суйлава хатĕрленес ĕçе çамрăксене активлăн хутшăнтармалла. Чăваш республикинчи комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем суйлава хавхаланулллăн хатĕрленеççĕ, предприятисемпе колхозсенче стахановла ĕçлеççĕ, суйлав законне вĕренеççĕ, культурăллă-массăллă ĕçе организацилеççĕ. Петрухин юлташ малалла çамрăк суйлавçăсем хушшинче агитацине пропаганда ĕçне вăйлатма кирли çинчен калать. Комсомол организацийĕсем ку тĕлĕшпе парторганизацисем енчен пысăк пулăшу кĕтеççĕ.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ **Андреева** юлташ хăйĕн сăмахĕнче СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе Совет органĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинчен каларĕ. Суйлавçăсен списокĕсене тĕрĕс тумалла, суйлав прависĕр хăварнă çынсене çав списоксене кĕртмелле мар, сасăламалли ещĕксемпе кабинăсене тата ыттисене те вăхăтра, тĕплĕн хатĕрлесе хумалла. Халĕ государство умĕнчи обязательствăсене тултарас тĕлĕшпе, ĕççыннисен культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе Советсен ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла.

ВКП(б) Етĕрне райкомĕн секретарĕ **Сомов** юлташ районри колхозсемпе предприятисенче тата учрежденисенче суйлав законне вĕренес ĕç анлăн сарăлса пыни çинчен каласа парать. Ĕççыннисен пухăвĕсенче «СССР Верховный Советне суйласси тата пирĕн задачăсем» ятлă темăсемпе докладсем пулса иртеççĕ. Çав докладсене райком бюровĕн членĕсемпе пленум членĕсем, районри партипе совет активĕнчи чи авторитетлăрах юлташсем туса параççĕ. Мĕнпур 30 суйлав участокĕ валли çуртсем тупса хатĕрленĕ. Пуçламĕш парторганизаци секретарĕсемпе агитколлективсен руководителĕсене пухса семинарсем туса ирттерни. Агитаторсем хĕрарăмсемпе çамрăк суйлавçăсем хушшинче ĕçлесси çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхаççĕ. Ватă суйлавçăсемпе уйрăмшарăн калаçаççĕ. Суйлава хатĕрленнĕ май районри ĕççыннисем государство умĕнчи хăйсен обязательствисене пурне те тултарассишĕн тăрăшаççĕ. Район государствăна планран ирттерсе тырă пама илнĕ хăйĕн обязательствине пурнăça кĕртрĕ, промышленность предприятийĕсем те хăйсен ĕçне лайăхлатрĕç.

ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ **Вишняков** юлташ идеологи ĕçне тата идейăллă-политикăллă ĕçе тĕпренех лайăхлатас ыйтусем çинчен чарăнса тăчĕ. Халăха ăнлантарса парас тĕлĕшпе ĕçлекен коммунистсем хăйсем теорие лайăх пĕлекен çынсем пулмалла. Вĕсем рабочисемпе колхозниксен тата служащисен мĕнпур ыйтăвĕсем çине уçăмлă та тĕрĕс ответсем пама тивĕçлĕ. Пирĕн кадрсем марксистла-ленинла теорие вĕренессине вăйлатмалла. Пропагандистсемпе агитаторсен политикăллă агитаци ĕçĕн мастерлăхне вĕренсе алла илмелле. Суйлав законне тата СССР Конституцине вĕренес ĕçе умра тăракан хуçалăх задачисене татса парассипе, ĕççыннисен культурăпа йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессипе çыхăнтармалла.

Пĕрремĕш ыйтупа прениpe тата çак юлташсем тухса каларĕç: **Митьков** юлташ (ВКП(б) Çĕрпŭ райкомĕн секретарĕ), **Чернов** юлташ (ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ), **Петров** юлташ (ВКП(б) Вăрнар райкомĕн секретарĕ), **Ильин** юлташ (ВКП(б) Муркаш райкомĕн секретарĕ), **Караушев** юлташ (ВКП(б) Шупашкар райкомĕн секретарĕ), **Смирнов** юлташ (ВКП(б) Вăрмар райкомĕн секретарĕ), **Архипов** юлташ (ВКП(б) Шăхасан райкомĕн иккĕмĕш секретарĕ), Вахнин юлташ (ВКП(б) Сĕнтĕрвăрри райкомĕн секретарĕ), **Вислобоков** юлташ (Улатăр хула Совет исполкомĕн председателĕ) тата **Студенецкий** юлташ («Красная Чувашия» хаçат редакторĕн заместителĕ).

Кун йĕркинчи иккĕмĕш ыйтупа пленум Чăваш АССР Совнарком председателĕн **А. М. Матвеев** юлташăн докладне итлерĕ.

Матвеев юлташ çакна палăртрĕ: республика промышленноçĕ куллен кирлĕ таварсем туса кăлармалли вунă уйăхри плана тултараймарĕ. Вырăнти промышленность предприятийĕсемпе промкооперации артелĕсем хăйсене панă ассортимента тытса пымаççĕ, ĕççыннисене куллен кирлĕ нумай таварсене парса çитереймеççĕ. Наркомпищепромăн районсенчи предприятийĕсем вунă уйăхри плана, тавар хакĕсемпе шутласан, тултарнă, анчах планпа пăхнă 17 тĕрлĕ изделирен 6 издели тăрăх кăна задание пурнăça кĕртрĕ. Союза пăхăнса тăракан пирĕн пысăк предприятисем куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе хăйсен аллинчи пур пек майсемпе усă курмаççĕ. Куллен кирлĕ таварсен пахалăхне тĕпренех лайăхлатмалла. Суту-илŭ организацийĕсем ку тĕлĕшпе предприятисем умне çирĕп ыйту лартмалла.

Матвеев юлташ малалла ĕççынни депутачĕсен районсемпе хуласенчи Совечĕсем вырăнти промышленность ĕçĕшĕн тŭрремĕнех ответлă пулса тăнине палăртать. Советсем вырăнти промышленноçа оперативлăн ертсе пыма куллен пулăшса тăма тивĕçлĕ. Парти райкомĕсемпе горкомĕсен куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине тĕпренех лайăхлатассишĕн тăрăшмалла.

Наркоматсемпе промсоюзсен тивĕçĕ — хăйсен предприятийĕсемпе артелĕсене техникăллă тата организациллĕ пулăшу парса тăрасси пулать.

Пирĕн куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине кĕске вăхăтрах вăрçăччěнхи виçене çитермелле, çав таварсене халăха çителĕклĕ таран парса тăмалла.

Матвеев юлташ доклачĕ тăрăх прениpe 18 çын тухса каларĕ.

ВКП(б) Улатăр горкомĕн секретарĕ **Шерстюк** юлташ вырăнти промышленноçпа промысла кооперации предприятийĕсен ĕçне наркоматсемпе промсоюзсем енчен тĕплĕн вĕренсе пĕлме кирли çинчен чарăнса тăчĕ.

Чăваш АССР Вырăнти промышленность халăх комиссарĕ **Климов** юлташ вырăнсенче предприятисен руководителĕсене тĕрĕс суйласа илме кирли çинчен, рабочисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе тăрăшма кирли çинчен калать. Предприятисен колхозсемпе транспорт пирки договорсем тумалла, хăйсем енчен çав колхозсене кирлĕ таварсем парса тăмалла.

Союза пăхăнса тăракан предприятисен руководителĕсем **Поздняков, Бунин** тата ытти юлташсем 1946 çулта отходсенчен куллен кирлĕ таварсем туса кăларма палăртни çинчен каласа пачĕç. Вĕсем каланă тăрăх, çав заводсенче пластмассăпа целлулоидран, тимĕртен куллен кирлĕ япаласем, электротехника япалисем туса кăларассине йĕркелеççĕ.

ВКП(б) Обком секретарĕн промышленность енĕпе ĕçлекен заместителĕ **Репкин** юлташ вырăнти промышленноçпа кооперации промышленноçĕн предприятийĕсенче партиллĕ-политикăллă ĕçе çителĕксĕр йĕркеленине палăртрĕ. ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен задачи—предприятисемпе артельсенче политикăллă воспитани ĕçне анлăн сарасси, куллен кирлĕ таварсем туса кăларас, вĕсен пахалăхне лайăхлатас ĕçе çынсем мобилизацилесси пулса тăрать.

Ишлей райсовет исполкомĕн председателĕ **Петров** юлташ чăпта çапакан артельсен ĕçĕсем çинчен чарăнса тăчĕ. Чăпта çапакан артельсем валли тарпромсоюз чĕртавара 100—120 километр таран аякра туса хатĕрлет. Çакă вăл ĕçе пысăк чăрмавсем кŭрет. Петров юлташ районри промкомбината Вырăнти промышленность халăх комиссариачĕ енчен пулăшу пама кирлине палăртрĕ.

ВКП(б) Обком секретарĕн суту-илŭпе пĕрлешŭллĕ апатлану енĕпе ĕçлекен заместителĕ **Романова** юлташ хăйĕн сăмахĕнче суту-илŭ организацийĕсем сутăнман таварсем илсе тултарни çинчен калать. Суту-илŭ организацийĕсем предприятисемпе артельсем умне халăха кирлĕ таварсем туса кăларас ыйтăва çирĕп лартмаççĕ. Романова юлташ малалла куллен кирлĕ таварсем тĕлĕшпе пĕр пек техникăллă образецсемпе условисем тума кирли çинчен, хаксене йĕркене кĕртесси çинчен чарăнса тăрать.

Пăрачкав райсовет исполкомĕн председателĕ **Смыков** юлташ предприятисенчи оборудованипе Вырăнти промышленность наркомачĕ енчен техника тĕлĕшпе контроллесе тăрассине вăйлатма кирли çинчен калать. Промсоюзсем артельсене çителĕксĕр ертсе пыраççĕ, вĕсене чĕртаварсемпе материалсем вăхăтра парса тăмаççĕ. Куллен кирлĕ таварем туса кăларма Пăрачкав районĕнче пысăк майсем пур, çав майсемпе туллин усă курмалла.

Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ **Терентьев** юлташ вырăнти промышленноçпа кооперации промышленноçĕн предприятийĕсенче управлени аппаратне пĕчĕклетме кирлине палăртать.

Чăваш АССР Госпланĕн председателĕ Тощев юлташ Союза пăхăнса тăракан предприятисенче отходсемпе туллинрех усă курма кирли çинчен калать. Предприятисемпе артельсенче культурăллă йĕрке тума кирлине палăртать.

Иккĕмĕш ыйтупа прениpe тата çак юлташсем тухса каларĕç: **Аникин** юлташ (Шупашкар горсовет исполкомĕн председателĕ), **Подклетнов** юлташ (Çĕмĕрле райсовет исполкомĕн председателĕ), **Соколов** юлташ (ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕн секретарĕ). **Степанов** юлташ (Промкооперации управленийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ), **Дроздов** юлташ (Çĕмĕрле комбиначĕн директорĕ), **Осипов** юлташ (Вăрнар райсовет исполкомĕн председателĕ), **Золотников** юлташ (Чăваш АССР финанс халăх комиссарĕ).

Сŭтсе-явнă ыйтусем тăрăх пленум тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитетĕнчен

Польшăри рабочисен партийĕн 1-мĕш съездне

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ Польшăри рабочисен партийĕн 1-мĕш съездне пухăннă çынсене—Польшăри рабочи класăн интересĕсемшĕн тата Польша халăхĕн ирĕклĕхĕшĕн шанчăклăн кĕрешекенскерсене—хĕрŭллĕн саламлать.

Польшăри рабочисен партийĕ, Польша халăхĕ фашистла нимĕç захватчикĕсенчен тата вĕсен Польшăри агенчĕсенчен ирĕкле тухассишĕн кĕрешнĕ тапхăрта пуçланса кайнăскер, çав кĕрешŭре пиçĕхсе çитрĕ, вăл Польшăри ĕççыннисен малта пыракан массăллă партийĕ пулса тăчĕ. Вăйлă, никама пăхăнман тата демократиллĕ Польша тăвассишĕн кĕрешсе, Польшăри рабочисен партийĕ демократиллĕ вăйсене пухса пĕтĕçтерес, государство тытăмĕн демократиллĕ органĕсене тăвас тата Польша республикин хĕçпăшаллă вăйĕсене туса хурас тĕлĕшпе пысăк çитĕнŭсем турĕ.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ çакна шанса тăрать: çĕнĕрен ура çине тăнă Польшăри рабочисемпе ĕçхресченĕсемшĕн тата демократиллĕ интеллигенцишĕн Польшăри рабочисен партийĕ ĕçе тĕрĕс ертсе пыракан тата писĕхнĕ организатор пулса тăрать, вăл хăйĕн тăван çĕршывĕн интересĕсене хŭтĕлеме тата Польшăра, нимĕç ирсĕрĕсем тапăннă пирки те, поляксен эмиграцири реакционерĕсен шайкки сутнă пирки те сиен курнă Польшăра çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçре пысăк йывăрлăхсене çĕнтерме пĕлет.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ çакна шанса тăрать: Совет Союзĕпе Польша республикин халăхĕсем хушшинчи тăванла союзпа çирĕп туслăх малалла та аталанасси тĕрекленсе пырĕç.

Сывă пултăр Польшăри рабочисен партийĕн 1-мĕш съезчĕ!

Сывă пултăр Польшăри рабочисен партийĕ тата унăн руководителĕсем!

Сывă пултăр Польшăри рабочи класс! Сывă пултăр вăйлă, никама пăхăнман, демократиллĕ Польша!

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

1945 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕ.

Участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратаççĕ

КАНАШ ХУЛИНЧЕ

Канашри вагонсем юсакан заводри пур цехсенче те участоксенчи суйлав комиссийĕсен составне кандидатсем тăратаççĕ.

Тимĕрçĕ цехĕнчи рабочисемпе служащисен тата инженерсен коллективĕ цехри паллă тимĕрçе, «За трудовую доблесть» медаль илме тивĕçлĕ пулнăскере, Димитрий Степанович Федин юлташа кандидата тăратма йышăннă.

Заводри инструментальнăй цехри рабочисемпе служащисен тата инженерсен коллективĕ Иван Андреевич Тиханюк юлташа кандидата тăратнă. Тиханюк юлташ цехра токарь пулса ĕçлет.

Ремонтно-механически цех коллективĕ Василий Димитриевич Решетов юлташа кандидата тăратнă. Решетов юлташ слесарь пулса ĕçлет, лайăх ĕçленĕшĕн ăна «Отличник-вагонник» паллипе наградăланă.

Заводри профсоюз организацийĕнчен Иван Сергеевич Смолин юлташа кандидата тăратнă. Вагонсем юсакан заводра вăл сбыт отделĕн начальникĕ пулса ĕçлет. Отечественнăй вăрçăра пулса вăл Мухтав орденĕ, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ тата икĕ Хĕрлĕ Ялав орденĕ илме тивĕçлĕ пулнă.

Культпросвет работникĕсен республикăри канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта культпросвет учрежденийĕсенче ĕçлекенсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура районсенчи культпросвет отделĕсен заведующийĕсем, чи лайăх ĕçлекен вулав çурчĕсен, колхоз клубĕсен тата библиотекăсен работникĕсем пулчĕç.

Канашлу СССР Верховный Совет суйлавне хатĕрленнĕ май культпросвет ĕçĕнчи задачăсем çинчен сŭтсе-яврĕ. Ку ыйтупа ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующи заместителĕ Ерлаков юлташ доклад туса пачĕ.

Февралĕн 10-мĕшĕнче пирĕн Тăван çĕршыв СССР Верховный Советне суйлать. Çитес суйлавсем вĕсем хамăр çĕршывшăн кăна мар, пĕтĕм тĕнчипе пит паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. 1937 çулхи суйлавсенче совет халăхĕ коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ тăратнă кандидатсемшĕн пĕр çын пек пулса сасăларĕ. Отечественнăй вăрçă çĕнтерŭпе вĕçленнĕ хыççăн, пирĕн суйлавсене тата лайăхрах ирттерессишĕн тăрăшса ĕçлемелле.

Суйлав кампанийĕ пуçланнăран вăрă пкĕ уйăх иртрĕ пулин те вырăнсенчи культпросвет учрежденийĕсем: вулав çурчĕсем, колхоз клубĕсем, соцкультура çурчĕсем, библиотекăсем, хĕрлĕ кĕтессем суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе пур чухне те çителĕклĕ таран ĕçлесе пыраймаççĕ-ха.

Ерлаков юлташ докладĕнчен тата канашлура тухса каланисенчен çакă паллă пулчĕ: хăшпĕр вулав çурчĕсен заведующийĕсем çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе кирлĕ таран ĕçлемеççĕ. Çавăн пек юлташсем пирки Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри вулав çурчĕн заведующийĕ Емельянов юлташ канашлура çапла каларĕ:

— Кунта хăшпĕрисем ял Совечĕсемпе колхозсем вулав çурчĕсене пулăшмаççĕ, тесе ŭпкелешме пăхрĕç. Манăн шутпа, çак япала пиртен, вулав çурчĕсенче ĕçлекенсенчен килет. Пирĕн хамăр ĕçе колхозниксене кăтартса парас пулать, вара колхоз та, ял Совечĕ те вулав çуртне пур енчен те пулăшса пырĕç. Пирĕн колхоз музыка инструменчĕсем илме вулав çуртне 20 пăт тырă уйăрса пачĕ. Ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне вулав çурчĕ валли те, унăн заведующийĕ валли те вутă турттарса панă, краççин хĕл каçа çутмаллăхах хатĕрленĕ. Пирĕн вулав çурчĕ суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет.

Пирĕн республикăра 135 вулав çурчĕн уйрăм çуртсем çук. Паллах, уйрăм çурт е уйрăм пŭлĕм çук пулсан, вулав çурчĕ тивĕçлипе ĕçлеме пултараймасть. ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, республикăра халĕ культпросвет учрежденийĕсен ĕçне пăхса тухас тĕлĕшпе смотр пулса иртет. Çак смотр пынă май тата СССР Верховный Совет суйлавне ирттерме хатĕрленнĕ май культпросвет учрежденийĕсен ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла.

Хăшпĕр çĕрте уйрăм суйлавçăсем çитес суйлав çинчен пĕлмеççĕ. Сăмахран, Сĕнтĕр районĕнчи Юнкăпуçĕнчи колхоз конюхĕпе правленири техничка суйлав хăçан пулмаллине пĕлмен. Вулав çурчĕ айăплă мар-и-ха çакăншăн?

Канашлура тухса калакансем Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи культпросвет управленийĕн ĕçĕсене те критиклерĕç. Культпросвет управленийĕ лайăхрах ĕçлемелле, кадрсене куллен пулăшса пырса, вĕсен пĕлŭлĕхне ŭстермелле, культпросвет работникĕсем хăйсен ĕçне чĕререн юратса туса пычăр тесе тăрăшмалла.

Партипе правительство культпросвет учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатма кирлĕ условисене пурне те туса панă. Вăрçă пынă пулин те, 1944 çулта правительство культпросвет работникĕсен ĕçукçине хăпартма йышăнни çакăн çинчен пит лайăх каласа парать. Халĕ ĕнтĕ культпросвет учрежденийĕсен ĕçне ертсе пыма Совнарком çумĕнче культпросвет управленийĕ, райсовет исполкомĕсем çумĕнче культпросвет отделĕсем туса хунă.

Культпросвет учрежденийĕсенче ĕçлекенсен пĕлŭлĕхне хăпартас тĕлĕшпе тĕрлĕ ĕçсем тăвас пулать. Ку енĕпе культпросвет работникĕсен семинарĕсен ĕçне лайăхлатни, тĕрлĕ курссем ирттерни кирлĕ. Анчах та хăшпĕр районсенчи культпросвет отделĕсем кадрсем хатĕрлесе вĕсене ĕçлеме вĕрентес ыйту çине кирлĕ пек çаврăнса пăхмаççĕ. Вăрнар, Калинино, Канаш, Кувакино тата ытти хăшпĕр районсем вулав çурчĕсен заведующийĕсене вĕрентсе хатĕрлемелли курса вĕренме пĕр çын та яман. Кадрсем хатĕрлес ĕç çине çавăн пек пăхни юрамасть.

Халĕ пĕтĕм çĕршыв СССР Верховный Совет суйлавне хатĕрленет. Çитес суйлавсем пирĕн халăх пурнăçĕнче çав тери пысăк событи пулса тăраççĕ. Хамăр государствăн чи аслă органне—СССР Верховный Советне Ленин—Сталин партийĕн аслă ĕçне чун-чĕререн парăннă çынсене суйласа ярас пулать. Çак ĕçре культпросвет учрежденийĕсен работникĕсем умĕнче пысăк та ответлă задача тăрать.

Канашлура Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ, ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ А. С. Вишняков юлташ тата Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи культпросвет управлени начальникĕ Медведев юлташ сăмах тухса каларĕç.

1945 ÇУЛХИ IV-мĕш КВАРТАЛТА ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА ДЕКАБРĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

Районсем тата вăрман хуçалăхĕсем	Плана тултарнĭ (процентпа): турттарас енĕпе	Плана тултарнĭ (процентпа): хатĕрлес енĕпе	Мĕнле вырăн йышăнать: турттарас енĕпе	Мĕнле вырăн йышăнать: хатĕрлес енĕпе
Пăрачкав	45,2	87,5	1	1
Çĕмĕрле	43,8	56,2	2	7
Кувакино	36,5	51,6	3	8
Йĕпреç	35,2	68,9	4	2
Чкаловски	34,8	57,6	5	5
Муркаш	33,3	27,8	6	23
Первомайски	30,0	41,1	7	11
Чурачăк	30,0	29,9	8	22
Октябрьски	28,4	19,8	9	26
Улатăр	27,9	31,6	10	19
Етĕрне	27,6	42,4	11	9
Комсомольски	26,9	34,4	12	15
Шăмăршă	26,8	40,7	13	13
Вăрмар	26,6	30,5	14	20
Сĕнтĕрвăрри	25,9	41,0	15	12
Красноармейски	24,2	31,8	16	18
Вăрнар	23,2	58,8	17	4
Хĕрлĕ Чутай	22,9	32,7	18	17
Çĕрпŭ	22,4	66,5	19	3
Тăвай	21,7	41,0	20	10
Куславкка	21,0	21,2	21	25
Елчĕк	20,3	30,3	22	21
Советски	18,9	33,8	23	16
Калинино	17,2	56,5	24	6
Шăхасан	16,1	16,9	25	27
Элĕк	15,6	10,1	26	29
Канаш	11,2	25,0	27	24
Ишлей	8,5	14,9	28	28
Сĕнтĕр	6,0	37,4	29	14
Шупашкар	4,5	4,9	30	30

* * *

Улатăр вăрман промхозĕ (топливо промышленноçĕ)	64,0	79,8	1	1
Канаш вăрман-промхозĕ (топливо промышленноçĕ)	63,2	28,5	2	13
Алтышеври вăрман завочĕ	53,2	58,9	3	3
Долгополянăри вăрман завочĕ	48,0	48,5	4	4
Йĕпреç вăрман-промхозĕ	41,5	28,2	5	14
Улатăр вăрманпромхозĕ	37,3	41,0	6	6
Çĕмĕрле вăрман хуçалăхĕ	35,5	16,5	7	20
Канаш вăрманпромхозĕ	33,9	23,5	8	17
Хĕрлĕ Чутай вăрман пункчĕ	33,2	34,4	9	9
Çĕмĕрле вăрман пункчĕ	31,0	18,0	10	19
Алтышево вăрманпромхозĕ	30,8	33,0	11	10
Йĕпреç вăрман хуçалăхĕ	29,4	23,7	12	13
Кире вăрман пункчĕ	28,9	24,8	13	15
Вăрнар вăрман-промхозĕ	27,6	36,5	14	7
Етĕрне вăрман-промхозĕ	25,7	36,2	15	8
Улатăр вăрман хуçалăхĕ	25,0	31,8	16	11
Буинск вăрман-промхозĕ	23,0	20,9	17	18
Шăмăршă вăрман-промхозĕ	22,3	61,2	18	2
Сĕнтĕрвăрри вăрманпромхозĕ	16,2	48,3	19	5
Йĕпреç-вăрман-промхозĕ (топливо промышленноçĕ)	12,6	14,5	20	22
Кире вăрман хуçалăхĕ	11,5	14,6	21	21
Çĕмĕрле вăрман-промхозĕ (топливо промышленноçĕ)	10,7	11,4	22	23
Шупашкар вăрман-промхозĕ (топливо промышленноçĕ)	4,8	28,8	23	12
Атăл леш енчи вăрманпромхоз	0,7	6,6	24	24

УКÇА-ТЕНКĔ ПУХАС ĔÇЕ ВĂЙЛАТМАЛЛА

ÇĔМĔРЛЕ. Район 4-мĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 43,3 процент кăна тултарнă.

Уйрăмах ку тĕлĕшпе Мыслец тата Магарин ял Совечĕсем юлса пыраççĕ. Вĕсем укçа-тенкĕ пухмалли плана декабрĕн 1-мĕшне 20 процент кăна тултарнă. Укçа-тенкĕ пухас ĕç начар пыни çак ял Совечĕсенче массăллă-ăнлантарулла ĕçе анлăн сарса яманнинчен тата финанс секцийĕсем ĕçлеменнинчен килет. Анат Кăмаша ял Совечĕ çумĕнчи финанс секцийĕ (председателĕ Маскина юлташ) юлашки вăхăтра пачах та ĕçлемест. Финанс секцийĕ 15 çынран тăрать. Ку вăхăта çитсе вĕсене пĕр хутчен те пухса калаçман, çавна пула вĕсем пĕри те ĕçлемеççĕ. Финанс секци членĕсем хăйсем те государство умĕнче укçа-тенкĕ тŭлес тĕлĕшпе парăмлă. Çав вăхăтрах ял Совечĕ финанс планне пурĕ те 25 процент кăна тултарнă.

И. СОРОКИН.

Нимĕçсен вăрçă пуçланăшăн айăплă тĕп преступникĕсене Нюрнберг хулинче суд туни

ДЕКАБРĔН 10-мĕшĕнчи КАÇХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Трибуналăн паянхи каçхи ларăвĕнче айăпланакан Кальтенбруннер пуçласа суда пынă. Ку таранччен вăл пуçне юн тулнă пирки суд ларăвĕсенче пулман (ун çинчен иртнĕ кунсенче пĕлтернĕччĕ). Трибунал председателĕ Лоуренс лорд çапла пĕлтерет: паян трибунал ларăвне айăпланакан Кальтенбруннер килчĕ, трибунал уставĕ тăрăх, айăпланакан Кальтенбруннерăн вăл хăйне-хăй айăплă е айăплă мар тесе шутлани çинчен каласа памалла. «Эпĕ хама айăплă тесе шутламастăп», тесе ответ парать Кальтенбруннер. Унтан вăл айăпланакансен малти йĕркине Кейтельпе Розенберг хушшине ларать.

Унтан трибунал председателĕ Америка айăплаканĕсен представительне Олдермене сăмах парать. Олдермен Германи ССР Союзне тапăнни çинчен калакан документсене кăтартса парать. Олдермен Томас генерал 1941 çулхи июнĕн 20-мĕшĕнче çырнă меморандума вуласа парать. Унта Германин экономики çинчен Гитлер мĕнле шутланине каласа панă. Томас генерал çапла çырнă:

«Аяларах каласа панă шухăш фюрерăн çĕнĕ шухăшĕ пулать. Ăна мана Тодт министр ăнлантарса пачĕ, каярахпа вара Кейтель фельдмаршал та çирĕплетрĕ. Эпир хамăрăн экономикăна тĕнчерен уйăрас тĕлĕшпе ытлашши шала кĕрсе кайнине пире вăрçă кăтартса пачĕ. Эпир хамăра çитмен кирек епле япалана та синтетически майпа е мĕнле те пулин урăх майпа çителĕклĕ таран туса кăларма пултараймастпăр. Сăмахран, эпир хамăра кирлĕ таран горючи туса кăларма пултараймастпăр, çавăнпа та вара эпир ку тĕлĕшпе никама пăхăнмасăр пурăнма пултараймастпăр. Çавăн пек урăх çĕршывсенчен тĕпренех уйăрălма хăтланни пирĕнтен çав тери пысăк ĕç вăйĕ ыйтать, çав ĕç вăйне эпир тупса пама пултараймастпăр. Çавăнпа та пирĕн урăх тĕрлĕ çул шырамалла. Мĕн çуккине, анчах çав çукки кирлĕ пулсан, яланах тенĕ пек çĕнтерсе илеççĕ. Пирĕн тĕллев —çар экономикинче паллă вырăн йышăнса тăракан пур территорисене те хамăрăн алла илесси пулать. Тăватă çуллăх плана тунă чухнех эпĕ çапла каларăм: урăх çĕршывсенчен эпир уйăрăлма пултараймастпăр, мĕншĕн тесен ун пек туни пирĕнтен çав тери пысăк ĕç вăйĕ ыйтать».

«Çапла ĕнтĕ,—тет Олдермен,—Совет Союзне хирĕç тунă Германи агрессийĕн тĕллевĕ паллă. Çакăнпа эпĕ Германи ССР Союзне малтанах тĕплĕн шухăшласа тунă план тăрăх тапăннине кăтартса пама чарăнатăп. Айăплакансен ытти представителĕсем нимĕç фашисчĕсем çав çĕршывра мĕнле вăрçнине кăтартса парĕç. Ку таранччен историре çавăн пек ирсĕр агрессипе пĕрлех варвăрла мелсемпе вăрçнин тĕслĕхĕсем нихăçан та пулманха. Совет халăхĕ тӳснĕ асапа шута илсе пĕтерес çук. Çак айăпланакансене вĕсен айăпĕн йывăрăшне кура наказани памалла».

Малалла Олдермен Германи США-на тапăнни çинчен каласа пама тытăнать. Айăплакан çапла калать: тĕнĕл держависем 1936 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче Коминтерна хирĕçле пакт тунă вăхăтрах вĕсен агрессиллĕ шухăш-кăмăлĕсем пуçланса кайнă. Айăплакан трибунал протоколĕсем çумне документ вырăнне хушса çав пакта кĕртме сĕнет. Çавăн пекех вăл тата Германипе Япони Коминтерна хирĕçле тунă пакт çумне Итали пĕрлешни çинчен калакан протокола кăтартса парать. Çав протокола 1937 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче ала пуснă. 1940 çулхи сентябрĕн 27-мĕшĕнче Германи, Итали тата Япони пакт тунă. Çав документ тăрăх, Европăра çĕнĕ йĕрке тăвас ĕçе Германипе Итали ертсе пынипе Япони килĕшнĕ. Çавăн пекех тата Хĕвелтухăçĕнчи аслă Азире çĕнĕ йĕрке тăвас ĕçе Япони ертсе пынине Германипе Итали йышăннă. Çав договорсене тунă чухне айăпланакан Риббентроп активлăн хутшăнса ĕçленине айăплакан уйрăмах палăртса хăварать. Çав пактсем пурте агрессиллĕ пактсем пулса тăраççĕ. Айăплакан гестапопа СС руководителĕ Гиммлер Япони посолĕпе Осимăпа калаçнине çырса пынă хута вуласа парать. Çав калаçу 1939 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче Берлинра пулса иртнĕ. Документ çине Гиммлер хăй карандашпа ала пуснă. Документра çапла каланă:

«Паян эпĕ Осима генерал патĕнче пултăм. Унта çакăн пек калаçу пулса иртрĕ: Пĕрремĕшĕ—фюрер сăмахĕ Осима генерала килĕшрĕ, мĕншĕн тесен ăна мораль тĕлĕшĕнчен тĕплĕн никĕслесе каланă. Иккĕмĕшĕ—эпир Германи, Итали тата Япони хушшинче договор тума май килнине сӳтсе-яврăмăр, ку договор вара çав çĕршывсем хушшинчи çыхăнăва та-та çирĕплетмелле. Осима генерал мана тата çакна пĕлтерчĕ: вăл Германи контрразведкипе пĕрле Российăна валеçсе унран Кавказпа Украинăна тытса илес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăннă иккен. Анчах та вăл тунă организаци вăрçă вăхăтĕнче çеç усăллă пулма пултарать».

Унтан айăплакан 1941 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче айăпланакан Риббентроп Осима генералпа калаçнине илсе кăтартать. Çав калаçун документне Риббентроп хăй ала пуснă. Документран çакă курăнса тăрать: гитлерла Германин руководителĕсем Инçетри Хĕвелтухăçĕнче Японие агрессиллĕ вăрçă пуçлаттарса яма мĕнпур майсемпе тăрăшнă.

Гитлерла çар руководителĕсем çавăн пекех тата США-на хирĕç вăрçа хатĕрленес ĕçе те активлăн хутшăннă. 1941 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованийĕ 24-мĕш номер директива кăларнă. Унта çапла каланă: «фюрер Японипе килĕштерсе ĕçлес тĕлĕшпе çакăн пек приказ пачĕ: Пĕрремĕшĕ—виçĕ çĕршыв пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçленин тĕллевĕ Японие Инçетри Хĕвелтухăçĕнче активлă ĕçсем тума хăвăртрах хутшăнтарасси пулать. Кунта вăрçă пуçланса кайсан, акăлчансен пысăк вăй тытса тăмалла пулать, США-н интересĕсем те вăрçă вăхăтĕнче Лăпкă океана куçса пырĕç. Япони вăрçа мĕн чухлĕ хăвăртрах хутшăнĕ, унăн ăнăçусем тăвас шанчăкĕ те çавăн чухлĕ пысăкрах пулĕ, мĕншĕн тесен вăл кунта вăрçа хатĕрленсе çитмен тăшмана тĕл пулĕ. «Барбаросса планĕ» тăрăх пулмалли операцисем Японие кунта политикăпа вăрçă тĕлĕшĕнчен çăмăллăхсем парĕç. Иккĕмĕшĕ—çакăн пек пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлессине хатĕрлес тесен, Японин çарне тĕреклетме пур майсемпе те пулăшмалла».

Малалла çав директивăра Японипе Германи вăрçă ĕçĕнче пĕр-пĕринпе килĕштерсе мĕнле ĕçлемелли çинчен тĕплĕн каласа панă. 1941 çулхи мартăн 29-мĕшĕнче Берлина Японин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Мацуока пынă. Вăл Германин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе Риббентроппа калаçнă. Риббентроп Японие Англие хирĕç вăрçă пуçласа яма ӳкĕтленĕ. 1941 çулхи апрелĕн 5-мĕшĕнче Риббентроппа Мацуока татах тепĕр хут калаçнă. Халĕ те Риббентроп Мацуокăна хăвăртрах вăрçă пуçласа яма ӳкĕтленĕ. 1941 çулхи майăн 24-мĕшĕнче Германин Токиори çар атташи японецсем Сингапурпа Манилăна тытса илме хатĕрленме пуçлани çинчен пĕлтернĕ.

Сăмах май, кунта айăплакан Геринг сăмахĕн пĕр вырăнне илсе кăтартать. Çав сăмаха Геринг 1938 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче Германири авиаци промышленникĕсене каланă: «манăн 5 тоннăллă бомба илсе Нью-Йорка вĕçсе çитекен тата унтан каялла вĕçсе таврăнма пултаракан самолетсем халĕ те çук-ха. Манăн Океан тепĕр енчи мухтанчăк çынсен карланкине пăкăласа лартма пултаракан бомбардировщиксем пулсан, эпĕ çав тери телейлĕ çын пулăттăм». Айăплакан çав документа суд протоколĕсем çумне хушма ыйтать. Вăл Пĕрлешӳллĕ Штатсене хирĕç агрессиллĕ вăрçă пуçласа ярас ĕçе Геринг хутшăннине кăтартса парать, тесе калать айăплакан.

Японецсем США-на тапăнас ĕçре Германи Японие ӳкĕтлени çав тери пысăк вырăн йышăнса тăнă. 1941 çулхи декабрĕн 7-мĕшĕнче Япони флочĕ Америка флотне Пирл-Харборта пĕр асăрхаттармасăрах вăрă-хурахла тапăннă. 1941 çулти декабрĕн 11-мĕшĕнче Риббентроп США-н Берлинри поверенăйне нота ярса панă. Çав нотăра вăл Германи Пĕрлешӳллĕ Штатсене хирĕç вăрçă пуçласа янине тӳрре кăларас шутпа суя сăлтавсем илсе кăтартнă.

Каçхи лару çакăнпа хупăнать.

ДЕКАБРĔН 11-МĔШĔНЧИ ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Паянхи ирхи ларăва уçнă хыççăн айăплакансен представителĕ çапла калать: эпир—айăплакансем паян гитлеровецсен официальнăй фотографсем ӳкерсе илнĕ документлă фильмĕсене кăтартса памалла тесе шутлатпăр. Çав кинодокумента «нацистла план» тесе ят панă.

Документлă фильм Розенберг гитлерла партине 1921—1939 çулсем хушшинче тунă хăйĕн малтанхи утăмĕсем çинчен каласа панипе пуçланать. Вăл каланă май кинохроника сценисене кăтартаççĕ.

Кинодокументăн ытти кадрĕсенче Гитлер влаçа тытса илнĕ хыççăн гитлеровецсем пуçпулса тăнине кăтартса параççĕ. Рейхстага суйланă кун Баварипе Берлинра мĕн пулса иртнине ӳкерсе илнĕ. Çак картина вăл тăшман тытса илнĕ хулана аса илтерет, кунта ирĕклĕ суйлавсем пулни нимĕн чухлĕ те палăрмасть: урамсенче хĕçпăшалланнă фашистсем çӳреççĕ, профсоюзсен сурчĕсемпе ытти политикăллă партисен сурчĕсем умĕнче ручной тата станковăй пулеметсемпе хĕçпăшалланнă штурмовиксен отрячĕсене тăратса тухнă.

Фильмăн иккĕмĕш пайĕнче еврейсене хĕсĕрленине тата гитлеровецсем организациленĕ бойкотсене кăтартса панă. Тепĕр картинăра çĕрле факелсемпе тустарса çӳрекен погромщиксене кăтартнă. Вĕсем «ариец мар писательсем» çырнă кĕнекесене çунтараççĕ, çав тери вăйлăн ялкăшса çунакан вут тавра ташлаççĕ. Тăпне сухатнă Геббельс сăмах калать. Вăл гитлеровецсем кăтартса панă тĕллев патне çитес тесе, çамрăксене «нимĕн умĕнче те чарăнса ан тăрăр», тесе чĕнсе калать. Халăх «нимĕçсем, хĕçпăшал тытăр!» тесе юрлать.

Тепĕр картинăра нимĕçсем çав хĕçпăшала алла илеççĕ. Гитлерла правительствăн членĕсем, вăл шутра айăпланакан Геринг, Папен тата Нейрат та, çав тери пысăк çĕнĕ самолета «пиллеççĕ». Малашнехи сценăсенче нимĕçсем ытларах та ытларах хĕçпăшалланса пынине кăтартнă. «Рейхстаг» членĕсем ала çупнипа Гитлер çапла калать: Германи малашне «хĕçпăшалсăрланассине» чарма шутлать.

Экран çине хĕçпăшал çеç мар, пулас салтаксем те тухаççĕ. Картинăна куракансем умĕнче пиншер те пиншер нимĕç çамрăкĕсем салтаксем пек утса иртеççĕ. Вĕсен хулпуççийĕсем çинче халĕ пăшалсем вырăнне кĕреçесем йăлтăртатса пыраççĕ. Çав кĕреçесемпе мĕн хăтланни вĕсем винтовкăна тыткалама пĕлнине те лайăх кăтартса парать. Кинодокументăн иккĕмĕш пайĕ гитлерла партин Нюрнбергра пулса иртнĕ 6-мĕш съездне кăтартнипе пĕтет. Куракансем умĕнче Гитлер, Гесс, Штрейхер тата Борман йышши фашистла политикăллă аркатуçăсем çеç мар, Редер тата генералитетăн ытти представителĕсем йышши çар çыннисем те иртеççĕ. Нюрнберг урамĕсенче Гиммлер ертсе пыракан штурмовиксемпе охранниксем хыççăн рейхсвер салтакĕсем утса çӳреççĕ. Вĕсене Пруссин генералĕсем ертсе пыраççĕ. Экран çинче—вĕçĕмсĕр митингсем, сăмах каланисем, параппан çапнисем, салтаксем утса çӳренисем иртеççĕ. Гитлеровецсен лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ кĕтĕвĕ пĕр харăс, «хайль». тесе кăшкăрса аллисене çĕклет.

Документăн виççĕмĕш пайĕнче агрессиллĕ вăрçăсене хатĕрленнине кăтартнă. Кунта гитлеровецсем общество шухăш-кăмăлне мĕнле çавăрнине сăнласа панă. Айăпланакан Ширах пулас тупă какайне хатĕрлес ĕçе ертсе пынă. Куракансем умĕнче фашистла çамрăксен нумай йышлă пухăвĕсемпе манифестацийĕсем иртеççĕ. Вĕсем салтаксем пек стройпа утса пыраççĕ, ют çĕршывсене тытса илме чĕнекен лозунгсене кăшкăраççĕ.

Гитлерла партин черетлĕ съездĕнче те çав сăмахсенех калаççĕ, çавăн пекех параппан çапаççĕ, утса çӳреççĕ. Хăйĕн черетлĕ сăмахĕнче Гитлер нимĕçсен хĕçпăшалĕсем çинчен тата агрессин пĕрремĕш акчĕ—нимĕçсен çарĕ Австрие пырса кĕни çинчен калать. Кунта вара Гитлер айăпланакан Кейтельпе пĕрле Вена хулипе пырса тухать.

Экран çинче—рейхстагăн ларăвĕ. Гитлер Австрие тытса илни çинчен каласа парать. Фрик, Функ, Заукель, Риббентроп, Гесс тата Зейсс-Инкварт ырласа ала çупаççĕ. Тепĕр кадрта Гитлер спортпаласра сăмах калать. Вăл Чехословакин Судет çĕрĕсене Германипе пĕрлештерме хушать. Гитлер хĕçпăшалпа усă куратпăр тесе хăратать. Анчах та ĕç хĕçпăшал патне çитеймен. Экран çине Муссолини, Чемберлен, Даладье тата Гитлер Герингпа, Риббентроппа тата ыттисемпе пĕрле тухать. Мюнхенри килĕшĕве ала пусаççĕ. Геринг, хăйĕн çав тери нумай орденĕсемпе медалĕсен йывăрăшĕпе пулмалла тарласа кайнăскер, лайăх услам е пысăк выигрыш тухнă чухнехи пекех кăмăллăн кулкаласа аллисене сăтăркалать. Унтан экран çине Германи çарĕсем Чехословаки çĕрне пырса кĕнине кăтартнă.

Экран çинче каллех тытамаклă Гитлер курăнать. Рейхстагра вăл çапла калать: вăрçă мĕн пулас пулсан, Европăри еврей халăхĕ пĕтĕ. «Рейхстаг депутачĕсем» хушшинче Гитлер сăмахне ырласа ала çупакан Шпеер, халĕ айăпланакансен тенкелĕ çинче лараканскер, курăнать.

Экран çинче Берлин урамĕсене гитлерла легион тухни курăнать. Çав легион Испанире Франко майлă çапăçнă. Гитлер хĕвеланăç чикĕри нимĕçсен тĕреклетнĕ вырăнĕсене пăхса çӳрет. Фашистла тĕнĕл туни çинчен калакан акта ала пусма Берлина Чиано пырать. Дипломатсем хыççăн Геринг, Редер тата Кейтель утса пыраççĕ. Гитлерăн импери канцелярийĕнче мире хирĕç икĕ каварлашуçă пакт туса ала пусаççĕ. Фильмăн виççĕмĕш пайĕ çакăнпа пĕтет.

Перерыв хыççăн документлă фильма малалла кăтартаççĕ. Айăплакансен представителĕ трибунала татах тепĕр хут çакна аса илтерет: ку фильм вăл—гитлерла кинооператорсем ӳкерсе илнĕ официальнăй кинохроника тăрăх тунă документ пулса тăрать, тет. Картинăн юлашки пайĕнче 1939—1944 çулсенчи агрессиллĕ вăрçăсене кăтартнă. Гитлерла каварлашуçăсем хăйсен Данциг тĕлĕшĕпе тунă программине пурнăçа кĕртме тытăнаççĕ. Вĕсем çав хулан урамĕсене çĕмĕрсе кĕреççĕ. Вĕсен танкĕсем çынсем пурăнакан çуртсене çывăхранах переççĕ, хăйсене хирĕç тăраканнисене пере-пере пăрахаççĕ, хула ялкăшса çунать.

1939 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнче, гитлерла каварлашуçăсен приказĕ тăрăх, нимĕçсен танкĕсем Польшăпа Германи хушшинчи чикĕ юписене тăпăлтарса пăрахаççĕ те ун хыççăн вара мотомеханизациленĕ чаçсемпе артиллери тата пехота чикĕ урлă çĕмĕрсе каçаççĕ. Польша çĕрĕ çийĕнче фашистла свастикăллă самолетсем ярăнса çӳреççĕ. Польша çĕршывне йышăнса пĕтернĕ вăхăтра рейхсмаршал Геринг 1940 çулта гитлерла авиаци тунă çитĕнӳсемпе мухтанать. Экран çинче—гитлерла çар машини Норвегипе Дание пырса кĕни тухать. Нимĕç самолечĕсем Копенгаген тĕлĕнче вĕçсе çӳреççĕ. Фашистла çăхансем Норвеги çине бомбăсем пăрахаççĕ. Вĕсем Осло хулине тытса илеççĕ. Гитлер бандичĕсем Норвеги столицин урамĕсенче утса çӳреççĕ. Унтан Голландипе Бельгие черет çитет. Каллех сывлăшран десант, парашютистсем антараççĕ, бомбардировщиксем мирлĕ хуласем тĕлĕнче вĕçсе çӳреççĕ, Роттердам хулин кварталĕсем çунаççĕ. Бомбăсемпе пушарсенчен хăраса хуларан тарса тухнă хĕрарăмсемпе ачапăчасем курăнаççĕ.

Франци командованийĕ Франци парăнни çинчен калакан акта Компьен вăрманĕнче ала пусать. Гитлер хавасланнипе нимĕн тума аптранипе киноаппарат умĕнче упăте пек хăтланать. Экран çинче историн татах çĕнĕ страници уçăлать. Риббентроп, Чиано тата Япони посолĕ имперăн çĕнĕ канцелярийĕнче çĕнĕ килĕшӳ туса ала пусаççĕ. Паянтан пуçласа вĕсем «Европăпа Азире çĕнĕ йĕрке» тума хатĕрленеççĕ.

Гитлерла каварлашуçăсен Балканри çĕршывсем тĕлĕшпе тунă планĕсене пурнăçа кĕртмелли вăхăт çитет. Болгарин премьер-министрĕ сутăнчăк Филов тĕнĕл çĕршывĕсемпе пĕрлешет. Экран çинче Филов Венăра Гитлера пуç тайса унăн аллине чăмăртанă тапхăр курăнать.

1941 çул. Гитлерла каварлашуçăсен çарĕсем Югославипе Грецие тапăнаççĕ. Германи авиацийĕ мирлĕ хуласемпе ялсене вĕçсе пырса бомбăсем пăрахать.

1941 çулхи июнĕн 22-мĕш кунĕ çитет. Гитлерла каварлашуçăсем хăйсен йыт-кĕтĕвĕсене Совет Союзĕ çине хăваласа кĕртсе яраççĕ. Гиммлер Минск çывăхĕнчи концентрациллĕ лагере пырса курать. Кунта тыткăна лекнĕ пиншер çар çынни çав тери тискер условисенче пурăнать.

Фильм 1944 çулта Гитлера вĕлерме хатĕрленекенсене «халăх суд тунине» кăтартнипе пĕтет. Кунта суд тĕсĕ те курăнмасть. Ку вăл тискеррĕн асаплантарса вĕлерни çеç.

Фильма кăтартса пĕтереççĕ. Англи айăплаканĕсен представителĕ халь кăтартнă фильма ĕç çумне хушса кĕртме ыйтать.

ДЕКАБРĔН 11-МĔШĔНЧИ КАÇХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Каçхи ларура, документлă кинофильмсене пăхнă хыççăн, Америка айăплаканĕ Стори полковник сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: çак эрнен юлашки кунĕсенче айăплакансен представителĕсем трибунала айăпланакансен этемлĕхпе вăрçă законĕсене хирĕç тунă преступленийĕсене палăртакан документсене вуласа парĕç, тенĕ.

Унтан Америка айăплаканĕсен представителĕ Додд сăмах тухса каланă. Вăл гитлеровецсем ют çĕршыв рабочийĕсене чуралантарас тĕлĕшпе тунă преступникла ĕçсем çинчен каланă. Çавăн çинчен каланă май вăл гитлеровецсем еврейсемпе ют çĕршыв рабочийĕсене, Германие чурасем вырăнне илсе кайнăскерсене, тискеррĕн тыткалани çинчен каласа панă.

Айăплании çак пункчĕсем тĕрĕссине кăтартмашкăн айăплакансем фотоӳкерчĕксем те кăтартĕç, тенĕ айăплакан. Малалла вăл çапла каланă: гитлеровецсем ют çĕршыв рабочийĕсене Германие илсе каясси тата вĕсене чуралантарасси питĕ вăйлă сарăлнă ĕç пулнă. Вăрçă законĕсемпе пĕтĕм тĕнчери право тыткăна лекнĕ çынсемпе усă курма чарать пулин те, гитлеровецсем вĕсемпе чурасем вырăнне усă курнă, вĕсене час-часах хăйсен çĕршывĕсене хирĕç ĕçлеттернĕ. Çав преступленисене импери кабинечĕ, гитлерла партин ертсе пыракан корпусĕ, СС, СА, СД, верховнăй командованин штабĕ, гестапо тата ытти организацисем те тунă.

Айăплакан малалла айăпланакансенчен кашнийĕ çав преступленисемшĕн мĕн чухлĕ ответлă пулнине кăтартса парать. Заукель ĕç вăйне пухса Германие ярас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăй пулнă, вăл ют çĕршывсенчи рабочисене Германие яма пухнăшăн тата вĕсене чуралантарнăшăн ответ тытмалла; Шпеер хĕçпăшал министрĕ тата Тодт организацийĕн руководителĕ пулса ĕçленĕ, вăл ют çĕршыв рабочийĕсене вăйпа пусмăрланăшăн тата вĕсене тискеррĕн тыткаланăшăн ответ тытмалла, çапла тыткаланине пула çав рабочисем чылайĕшĕ вилнĕ; Геринг тăватă çуллăх плана пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлекен генеральнăй уполномоченнăй пулнă, çавăнпа вăл çав преступленисемшĕн ответ тытмалла; Розенберг хĕвелтухăçĕнчи оккупациленĕ облаçсен министрĕ пулса ĕçленĕ пирки, Франк — Польша генерал-губернаторĕ пулса ĕçленĕ пирки, Зейсс-Инкварт Голландири наместник пулса ĕçленĕ пирки, Кейтель—Германин хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕн начальникĕ пулса ĕçленĕ пирки çав асăннă преступленисемшĕн ответ тытмалла. Ют çĕршыв рабочийĕсене тискеррĕн тыткалани тата вĕсене чуралантарни — гитлеровецсен руководителĕсем теорипе политика енчен кăтартса панисемпе пĕтĕмпех килĕшсе тăнă, çав руководительсем Германи халăхне «господасен расси» тесе пĕлтернĕ. Çавăн пек кăтартса панисене гитлерла руководительсем каланă сăмахсенче тата вĕсен документсенче тупма пулать.

1939 çулхи майăн 23-мĕшĕнче Гитлерăн çĕнĕ рейхсканцелярийĕнче канашлу пулса иртнĕ. Унта Гитлер, Геринг, Редер, Браухич, Кейтель тата ыттисем те пулнă. Çав канашлура Гитлер çапла каланă: «Пирĕн Хĕвеланăçĕпе вăрçмалла пулса тăрсан, Хĕвелтухăçĕнчи пысăк çĕрсем алăра пулни пирĕншĕн лайăх пулать. Эпир вара çав районсен пуянлăхĕ çине шанма пултаратпăр. Çав районсенчи халăхпа ĕç вăйĕ вырăнне усă курма пултаратпăр».

1942 çулхи апрелĕн 24-мĕшĕнче айăпланакан Заукель Розенберга çапла çырнă: «Ĕç вăйне çĕнĕрен çав тери нумай мобилизацилени пире хĕçпăшаллă вăйсем Адольф Гитлер ертсе пынипе тытса илнĕ пысăк пуянлăхпа усă курма кирлĕ. Çав пуянлăхпа пирĕн хамăрăн хĕçпăшаллă вăйсем валли тата Германие кирлĕ япаласем парса тăрас ĕçре усă курмалла. Тытса илнĕ территорисенчи чĕртаварсемпе тата ĕç вăйĕпе Германишĕн тата унăн союзникĕсемшĕн усă курмалла».

Гитлеровецсем тытса пынă политикăн никĕсĕнче нимĕç раси пуçпулса тăни çинчен калакан «теори» выртнă. 1943 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче Украина рейхскомиссарĕ Кох Киев хулинче çапла каланă: «Эпир господасен раси пулса тăратпăр, пирĕн хаяррăн тыткаламалла. Кунти халăхăн ĕçлемелле, ĕçлемелле, татах та ĕçлемелле. Халăх апат çителĕклĕ çиеймен пирки çав çынсенчен хăшпĕрисем начарланса каяççĕ. Халăх пиртен апат ыйтма пултараймасть. Эпир кунта маннăй кĕрпи валеççе пама килмен. Эпир кунта тăшмана çĕнтерме кирлĕ никĕс туса хума килнĕ. Эпир господасен раси пулса тăратпăр. Пирĕн çакна асра тытмалла: Германин чи начар рабочийĕ те, расăпа биологи енчен илсен, кунти халăхран темиçе пин хут хаклăрах».

1943 çулхи октябрĕн 4-мĕшĕнче гестапо руководителĕ СС рейхслейтерĕ Гиммлер Познань хулинче эсэсовецсен генералĕсен канашлăвĕнче сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Вырăссене е чехсене мĕн пуласси мана пĕртте интереслентермест. Çав нацисем хăйсен раса тĕлĕшĕнчен таса пайĕнчен мĕн пама пултарнине эпир илĕпĕр, кунтан ачасене те турттарса кайăпăр. Çав нацисем ырă курса пурăнĕç-и, е вĕсем выçă вилĕмпе вилĕç-и—вăл мана çав çынсемпе эпир хамăр культурăшăн чурасем вырăнне усă курмалла пулнă пирки çеç интереслентерет. Урăх нихăш енчен те интереслентермест. Танксене чармалли канав чавнă чухне 10.000 вырăс хĕрарăмĕ халтан кайса ӳкнипе ӳкменни мана пĕр енчен çеç интереслентерет: вĕсем Германи валли чавакан çав канава чавса пĕтернĕ-и, çук-и».

Малалла айăплакан питĕ секретлă меморандума вуласа парать. Ăна Розенберг ырланă, 1944 çулхи июлĕн 12-мĕшĕнче çырнă. Çав меморандумра центрти армисен ушкăнĕ йышăннă çĕрсенчен çамрăксене Германие куçарасси çинчен каланă. Унта çапла каланă: «Армисен ушкăнĕ» 10 çултан пуçласа 14 çула çитнĕ 40—50 пин çамрăка импери территорине яма шутлать. Çамрăксен бюровĕ çавăн çинчен Тодт организацийĕпе калаçма пуçланă ĕнтĕ. Икĕ çул вĕрентсе ĕçлеттернĕ хыççăн çав çамрăксемпе квалификациллĕ рабочисем вырăнне усă курма шутлать. Вĕсене Тодт организацийĕ вĕрентмелле, унăн вăл ĕçе тума техникăллă майсем пур. Германи учрежденийĕсем çапла тума питĕ хистеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен ученикĕсем çитмеççĕ. Çак ĕçе тăшманăн çар хăватне вăйлатма парас мар тесе тата тăшманăн малашне халăх сахаллантăр тесе тумалла. Çак шухăша рейхсфюрер çеç мар, фюрер та ырлать».

Гитлеровецсем хăйсем оккупациленĕ çĕршывсенчен ĕç вăйне иле-иле кайнă, вĕсем арăмсене упăшкисенчен, ачасене ашшĕ-амăшĕсенчен уйăрса илсе кайнă. Илсе кайнă чухне тата Германире ĕçленĕ вăхăтра темиçе çĕр пин çын вилнĕ. Франк, Польша генерал-губернаторĕ пулса ĕçлесе, темиçе çĕр пин поляка нимĕç чуралăхне ăсатнă.

Франк хăйĕн дневникĕнче 1940 çулхи майăн 10-мĕшĕнче çапла çырса хунă: «Генерал-губернатор поляксен ĕç вăйне ирĕксĕрлесе илсе каяс ыйтăва татса парать. Германире ĕçлеме ирĕксĕрлемесĕр çителĕклĕ таран ĕç вăйĕ илсе кайма çук пирки, ăна ирĕксĕрлесе илсе каяççĕ. Ирĕксĕрлесе илсе каяс тесессĕн, поляк арçынĕсемпе хĕрарăмĕсене арестлес пулать. Геринг генерал-фельдмаршал нумаях пулмасть хăйĕн вăрăм сăмахĕнче империе пĕр миллион рабочи яма кирли çинчен каланă. Халиччен 160.900 рабочи янă. Пысăк йывăрлăхсене сирсе ямалла пулать. Çавăнпа та районсен начальникĕсемпе хуласен коменданчĕсене кăтарту памалла пулать, ĕç ăнăçассине шанса тăмалла пултăр. Чиркĕве е кинона çӳрекен çамрăк поляксене арестлени поляксене, паллах ĕнтĕ, пăшăрхантарĕ. Пĕтĕмпе илсе каласан, ĕçлеме пултаракан çав çамрăксене урамсенчен хăваласа янин хирĕç калама çук. Çынсене хупăрла-хупăрла илни—чи лайăх май пулнă пулĕччĕ, ăна тӳрре кăларма пулать. Хупăрласа илнĕ вăхăтра урамсенче кашни поляка чармалла та унтан вăл мĕнле ĕçпе пурăнни çинчен, ăçта ĕçлени çинчен тата ытти çинчен те ыйтмалла».

1943 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕнче импери министрĕ Ламмерс генерал-губернаторствăри лару-тăру çинчен Гиммлера секретлă доклад çырса янă. Çав докладра çапла каланă: «Ĕç вăйне ирĕксĕрлесе пухнă, сăмахран каласан, ĕç отделĕсем уйăрса хунă группăсем поляксене чиркӳсемпе киносенче тытнă та Германие ăсатнă».

Тепĕр документра, поляксен фермисене тытса илни çинчен тата поляксен ялхуçалăх рабочийĕсене Германие ăсатни çинчен калакан документра, çапла каланă: Германин Хĕвелтухăçĕнчи ялхуçалăх корпорацийĕ поляксен нумай фермисене тытса илнĕ. Çав фермăсен хуçисем пулнă çынсене хăйсен çемьисемпе пĕрле ялхуçалăхĕнче ĕçлеме Германие янă.

1942 çулхи ноябрĕн 26-мĕшĕнче Заукель, ĕç вăйĕ тĕлĕшпе генеральнăй уполномоченнăй пулса ĕçленĕскер, хăйĕн циркулярĕнче çапла çырнă: Хăрушсăрлăх полицийĕн начальникĕпе тата СД-па калаçса таталнă тăрăх, кунта ĕçлесе пурăнакан еврейсене Германирен ытти çĕре куçармалла, вĕсем вырăнне генерал-губернаторствăран илсе килекен поляксене лартмалла».

Заукеле хӳтĕлекен çак тĕлте айăплакана чарать те çапла калать: Заукель çав документсем тĕрĕс мар тесе калать. Çав документсем çине алăпа çырса мар, машинкăпа пичетлесе ала пуснă,—тет хӳтĕлекен. Малалла вăл çапла калать: вăл документсемпе маларах паллашма май паман пирки тата çак ыйтупа Заукельпе калаçма май пулман пирки, эпĕ вăл документсене вуласа парассине тепĕр вăхăта хăварма ыйтатăп, тет. Суд председателĕ лорд Лоуренс çапла калать: хӳтĕлекен çав документсемпе пуринпе те ыран паллашма пултарĕ, тет.

Вара трибуналăн каçхи ларăвĕ хупăнать.

Финляндири вăрçă преступникĕсене суд туни

ХЕЛЬСИНКИ, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 11-мĕшĕнче Финляндири вăрçă преступникĕсен ĕçне пăхакан судра чи малтан тĕп айăплакан юстици канцлерĕ Тарьянне тăратнă запискăна итленĕ. Çав запискăра Пĕрлешнĕ нацисем Финляндие вăрçăран тухмашкăн мирлĕ килĕшӳ тума сĕннине кăтартса панă. Запискăра уйрăмах çакна асăрхаттарнă: президент Рюти, премьер-министр Рангель, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Виттинг, оборона министрĕ Вальден, çавăн пекех тата маршал Маннергейм мирлĕ калаçусем пуçлама сĕннине сирсе янă.

Суд ларăвĕнче Союзниксен Финляндири Контроль Комиссийĕ министрсен советне панă документсем питех те интереслентерпĕ, вăл документсене халь тĕп айăплакан аллине панă. Çав документсем хушшинче çаксем пур: «Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатĕнчен» тенĕ пĕлтерӳ, ăна 1941 çулхи ноябрĕн 18-мĕшĕнче совет хаçачĕсенче пичетленĕ тата радиопа пĕлтернĕ; «Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи ĕçсем» (СССР Наркоминделĕнче 1944 çулхи апрелĕн 22-мĕшĕнче пулса иртнĕ пресс-конференци çинчен пĕлтерни); Совет Союзĕн, Великобританин тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствисем гитлерла Германи майлă пулса çапăçакан Венгрие, Румыние, Болгарие тата Финляндие чĕнсе калани, ăна «Правда» хаçатра 1944 çулхи майăн 13-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă.

Çакăн хыççăн суд президент пулнă айăпланаканăн Рютийĕн сăмахне итленĕ.

Финляндири вăрçă преступникĕсен ĕçĕсене пăхакан судăн декабрĕн 10-мĕшĕпе 11-мĕшĕнче пулса иртнĕ 4-мĕшпе 5-мĕш ларăвĕсем, судăн çĕнĕ председателĕ Меллер ертсе пынă пулин те, ноябрь уйăхĕн варринче пулса иртнĕ виçĕ лару пекех официальнăй мар обстановкăра пулнă. Суд процессуальнăй нормăсене пĕрре те тытса пымасть.

Журналистсем хушшинче çапла шутланăччĕ: Таннерпа Кивимякие айăплас тĕлĕшпе декабрĕн 10-мĕшĕпе 11-мĕшĕнче çĕнĕ материалсене вуласа панă хыççăн суд çав пуринчен те айăплăрах икĕ преступника та пулин арестлеме йышăнĕ, тенĕччĕ, анчах ун пек пулмарĕ, суд çав çĕнĕ материалсене пăхса тухнă хыççăн та декабрĕн 11-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен айăпланакан Рютие икĕ сехет хушши хăйне хӳтĕлекен сăмах калама ирĕк панă.

ЯПОНИРИ ВĂРÇĂ ПРЕСТУПНИКĔСЕНЕ СУД ТĂВАС УМĔН

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Токио хулинчен çапла пĕлтерет: Японири вăрçă преступникĕсене суд тунă чухне Америка енчен тĕп айăплакан пулса ĕçлеме лартнă Кенан çапла пĕлтернĕ: вăрçă преступникĕсен списокне 250 çынна ытла кĕртнĕ, вĕсене пурне те 1937 çулхи июль уйăхĕнчен пуçласа вăрçă пĕтиччен тунă тĕрлĕ преступленисемшĕн айăплаççĕ. Çав вăрçă преступникĕсене ушкăнăн-ушкăнăн суд тума йышăннă.

ИОДЛЬ АРĂМНЕ ТЫТСА ХУПНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, американецсен çар полицийĕ Иодль генералăн арăмне тытса хупнă. Иодль генерал—Нюрнберг хулинче айăпланакан тĕп вăрçă преступникĕсенчен пĕри пулса тăрать.

МУССЕРТА ВĔЛЕРМЕЛЛЕ ТУНĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Гаага хулинчен çапла пĕлтерет: Голландин специальнăй трибуналĕ Голландири фашистсен пуçлăхне Муссерта персе пăрахмалла тунă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00474 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 59х42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.